Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАЙ 27 ЕРНЕКУН

119 (4931) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Чăваш халăхĕн пысăк телейĕ

Ĕçхалăхĕн йуратнă çулпуçĕ — Аслă Сталин тата унăн сывăх соратникĕсем Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Микойан тата Иежов йулташсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пани çинчен пĕлтернине чăваш халăхĕ пысăк кăмăлпа, вĕçĕмсĕр савăнса, хавхаланса кĕтсе илчĕ. Çак паллă событие Шупашкар хулинчи ĕççыннисем майăн 25-мĕшĕнче пысăк митинг ирттернипе хапăлларĕç.

Пур суйлав умĕнхи пухусенче те халăхсен йуратнă çулпуçĕн—Аслă Сталин йулташăн йатне чи малтан асăнчĕç, мĕншĕн тесен, вăл йат — пирĕн çĕршыва пĕр çĕнтерӳрен тепĕр çĕнтерӳ патне илсе пыракан, вăл йат — аслă Конституци туса паракан генийĕн йачĕ. Вăл йат мĕн пур етемлĕхĕн çĕнтерӳ хаваслăх йачĕ. Пур суйлав умĕнхи пухусенче Сталин йулташăн йачĕпе пĕрлех унăн сывăх шанчăклă соратникĕсем Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Микойан тата Иежов йулташсен йатне асăнчĕç. Вăл ĕнтĕ ĕççыннисем Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр парăннине, йуратнине, ĕçхалăхĕ коммунисссен партийĕ, унăн Тĕпкомĕ тата халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тавра таччăн пĕтĕçсе тăнине кăтартать.

Халăхсен йуратнă çулпуçне Сталин йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне пĕрремĕш депутата суйлани — Чăваш республикĕнчи ĕççыннисемшĕн пит те пысăк телей, савăнăç, мухтав. Енер, майăн 26-мĕшĕнче халăхсен çулпуçне Сталин йулташа Канаш савăт суйлав округĕнчи суйлав комиссийĕ Канаш савăтри 56-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума кандидата регистрацилерĕ.

Çавăн пекех тата округри суйлав комиссисем Сталин йулташăн сывăх соратникĕсене: совет правительстви пуçлăхне Молăтăв йулташа Шупашкар хулинчи 2-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх, ССР Сойузĕн Оборонă Халăх Комиссарне ССР Сойузĕн пĕрремĕш маршалне Ворошилăв йулташа Мушар суйлав округĕ тăрăх (Тăвай районĕ), Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарне тата Чукунçул Халăх Комиссарне Каганович йулташа Улатăр чукунçул хула суйлав округĕ тăрăх, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителне Микойан йулташа Иетĕрне йал суйлав округĕ тăрăх, Шалти ĕçсен Халăх Комиссарне тата Шыв транспăрт Халăх Комиссарне Иежов йулташа Чурачăк суйлав округĕ тăрăх (Çĕрпӳ р.) Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума кандидата регистрацилерĕ.

Сталин йулташ тата унăн сывăх соратникĕсем Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Микойан тата Иежов йулташсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма килĕшӳ пани. вĕсене суйлав округĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума кандидата регистрацилени—чăваш халăхĕшĕн историче пулман, халиччен курман сав тери пысăк телей, савăнăç, пысăк мухтав, чыс.

Чăваш автономине туни—Чăваш республикĕн ӳсĕмĕ, аталанăвĕ Сталин йулташ йачĕпе таччăн çыхăнса тăрать. Çавăнпа та чăваш халăхĕн савăнăçĕ вĕçĕмсĕр аслă.

Чăваш халăхĕ Сталин йулташ 1937 çулта хăйĕн суйлавçисем умĕнче каланă чаплă, тĕрĕс сăмахĕсене пит те лайăх астăвать. Сталин йулташ унчухне çапла каланă:

„Хам йенчен ене сире, йулташсем, есĕр Сталин йулташа хăйулăнах шанса тăма пултараттăр тесе шантарасшăн. Есĕр, Сталин йулташ халăх умĕнчи, рабочи клас умĕнчи, хресченсем умĕнчи, хăйĕн парăмне татма пĕлĕ тесе шанма пултараттăр".

Чăваш халăхĕ ĕççыннисен çулпуçне Аслă Сталин йулташа вĕçĕмсĕр шанса, Сталин йулташăн тата унăн шанчăклă соратникĕсемшĕн пысăк хаваслăхпа сасăласа пирĕн çĕршывăн тĕлĕнмеле чаплă пуласлăхĕшĕн, телейлĕ, ирĕклĕ пурнăçшăн сасăлĕ.

Сталин йулташ тата унăн соратникĕсем пире йуратнипе, шаннипе Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем социалисăм строительствин пур участкисенче те тата хастарлăхрах ĕçленипе, халăх тăшманĕсемпе, пирĕн çĕршывăн пур тăшманĕсемпе кĕрешме хамăрăн вăй-халăмăра темиçе хут ытларах ӳстерипе, коммунисссемпе партире тăманнисен блокне татах хытăрах çирĕплетнипе, суйлав кампанине татах аплăрах сарнипе ответлĕç.

Орденлă Чăваш республикĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратса ситерчĕ. Халăх хăйĕн кандидатурисене тĕплĕн шухăшласа палăртрĕ. Вăл кандидатсем Сталин йулташ кăтартнă пек принципла государствă деятелĕсем пулса тăмала.

Çак кунсенче пур суйлав округĕсенче те рабочисен, колхозниксен тата ĕççынни представителĕсен округри суйлав умĕнхи канашлусем пулса иртрĕç. Вăл канашлусем пысăк çĕкленӳпе иртрĕç. Канашлăва пынисем хăйсен округĕсене кĕрекен ĕççыннисем умĕнче камшăн сасăлама агитацилесси пирки, хăш кандидатшăн тăмали çинчен килĕшсе татăлчĕç. Вăл канашлусенче рабочисем, колхозниксем, ĕççыннисем пирĕн чаплă çĕршывăма, халăхсене капиталисăм пусмăрĕнчен хăтарса, телейлĕ пурнăç патне илсе пыракан Ленин—Сталин партине мухтаса, ырласа хĕрӳллĕ сăмахсем каларĕç.

Акă, Шĕнер суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлура (Çĕрпӳ р.) „Майăн 1-мĕш" колхозри 63 сулхи колхозник П. Н. Николайĕв йулташ çапла каларĕ:

„Йулташсем! Ĕлĕк те „суйлавсем" пулнă. Анчах та чухăнсем, хĕрарăмсем тата чылай чухне вăтамсем те суйлава хутшăнайман. Пуйансене пуйансем, пупсене пупсем суйланă ун чухне. Ерех хыççăн кайнипе пуйансен аллине лекнĕ çынсем пуйансемшĕн сасăлани те сахал мар пулнă.

Халĕ пурте суйлава каррăн хутшăнатпăр, Сталинла Конституци хĕрарăмне те, арçынне те пĕр пек правасем пачĕ. Епĕр РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен депутачĕ пулма чи тĕрĕс ĕçлекен çынсене, хамăршăн тăрăшакансене палăртатпăр.

Епĕр ийунĕн 26-мĕшĕнче пурте пĕр çын пек пулса, суйлав участкисене пырса, тăван çĕршыв интересĕсемшĕн кĕрешекенсемшĕн хамăр сасăсене паратпăр.

Сывă пултăр пире пуйан та культурлă пурнăç туса паракан Сталин йулташ!"

Çакăн пек ĕнтĕ пирĕн Совет гражданĕсен—суйлавçăсен сăмахĕ, шухăшĕ, ĕмĕчĕ. Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем государствăн аслă органне—Верховнăй Совета тăван Сталин йулташа, унăн сывăх паттăр соратникĕсене суйланипе пĕрлех, хăйĕн чи лайăх ывăл-хĕрĕсене, социалисăмшăн, халăх телейĕшĕн паттăр кĕрешекене, Ленин çулĕпе çирĕп пыракансене суйлать.

Суйлавсем пуçланиччен шăп пĕр уйăх йулчĕ. Историлĕ куна — ийунĕн 26-мĕшне производстварти çĕнĕ çĕнтерӳсемпе кĕтсе илер, социалисăмла ăмăртăва, пĕтĕм халăхăн йухăмне—стахановла йухăма татах та анлăрах сарар. Суйлав кампанине тивĕçлĕн йĕркелер. Пĕтĕм халăхăн чаплă уйавĕ кун—ийунĕн 26-мĕшĕнче суйлава каррăн тухса йуратнă çулпуçшăн, тăван аттешĕн — Аслă Сталиншăн, унăн шанчăклă соратникĕсемшĕн, халăхăн йуратнă лидĕрĕсемшĕн: Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Микойан тата Иежов йулташсемшĕн, коммунисссемпе партире тăманнисен блокăн кандидачĕсемшĕн, халăхăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсемшĕн, социалисăмла çĕршывăн патриочĕсемшĕн пурте пĕр çын пек пулса сасăлар!

Германи фашисĕсен планĕсем

Чехословакири нимĕçсен фашисла партине организацилекенĕ пулнă Рудольф Иунг,—хальть вăл Германи фашисла охранă отрйачĕн начальникĕ,—Берлинра доклад туса панă. Докладра вăл Германи фашисăмĕ Чехословаки пирки мĕнле политикă тытни çинчен каласа кăтартать.

Чехословакири Судет районĕсем çеç мар нимĕçсен, тата Богемипе Моравия те, Силези те—нимĕçсеннех,—тенĕ Иунг. Унăн сăмахĕсем тăрăх, Чехословаки столици—Прага та „тахçăн авал Германи столици пулнă" иккен.

Германи фашисĕсен шухăшĕпе, çав районсене пурне те Германи çумне пĕрлĕштермелле Германипе Чехословаки хушшинчи хирĕçӳсене вăрçăпа çеç татса пама пулать,—тенĕ Йунг.

(ТАСС).

Германи Чехословакийе хăратни

ПАРИЖ, майăн 25-мĕш. (ТАСС). Қаçхи пичет Берлинран илнĕ телеграммăсене пичетлесе кăларнă. Унта çапла пĕлтерессĕ: Германин йутçĕршыв ĕçĕсен министăрĕ Прагăри посланнике Германи чиккине пăснине хирĕç,—Чехословакин çар самольочĕсем пăсна пулать,—çине тăрсах хирĕçлеме хушнă.

Радио агенствин Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи правительствинчен çаксене ыйтма хушнă: чиккĕ çывăхĕнче тăракан чех çарĕсене кайалла илмеле, йулашки кунсенче пулнă чиккĕри инцидентсем пирки ăнлантарса памала, тата „Судет нимĕçсен территоринчи йĕркине тепĕр хут йĕркелемелеле". „Пари суар" хаçат корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Германи правительстви çавнашкалах нимĕçсен Судет облăçĕнчи Чехословаки çарĕсене кайала илме ыйтать.

Иосиф Виссарионович Сталина Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрацилени

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Канашри 56-мĕш номĕрлĕ савăт суйлав округĕнчи суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Иосиф Виссарионăвич Сталина

регистрацилесси çинчен йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен округри суйлав комиççине килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, çав документсем „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 48, 49, 50 тата 52-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳллĕ пулнине палăртса, округри суйлав комиççи çапла йышăнать:

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 51-мĕш статйи тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Канашри 56-мĕш номĕрлĕ савăт суйлав округĕ тăрăх баллотировкă тума Канашри вакунсем йусакан савăтри рабочисен пĕрлехи пухăвĕ, çавăн пекех тата Канаш савăт суйлав округĕнчи рабочисемпе ĕççынни обшчĕстви представителĕсен округри канашлăвĕ,—вăл пухусемпе канашлура 1800 çын пулнă,—Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă ПСК(б)П Тĕпком секретарĕн, ĕççыннисен йуратнă çулпуçĕн Иосиф Виссарионăвич Сталин,—1879 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Мускав хулинче, Кремльте пурăнать,—кандидатурине регистрацилес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйи тăрăх, Иосиф Виссарионăвич Сталин кандидатурине Канашри 56-мĕш номĕрлĕ савăт суйлав округĕ тăрăх суйлав бюллетенне кĕртес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 55-мĕш статйи тăрăх, çак постановленине пурте пĕлсе тăма пичетлесе кăларас.

Округри суйлав комиççи председателĕ М. К. Кисляков.

Председателĕн заместителĕ Ф. А. Моколкин.

Комиççи секретарĕ И. Р. Дйаченкă.

Комиççи членĕсем: Кудряшов, Васильйĕвă, Краснов, Йегорăв, Демйанков, Гаврилăв.

Вйачеслав Михайлăвич Молăтăва Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрацилени

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар хулинчи 2-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Вйачеслав Михайлăвич Молăтăва

регистрацилесси çинчен йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен округри суйлав комиççине килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, çав документсем „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 48, 49, 50 тата 52-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳллĕ пулнине палăртса, округри суйлав комиççи çапла йышăнать:

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 51-мĕш статйи тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шупашкар хулинчи 2-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх баллотировкă тума Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул тата çĕнĕ савăт строительствинчи, стройтрестри, ата-пушмак хапрăкĕнчи, макарон хапрăкĕнчи, совхозри рабочисен, инженерсен, техниксен, государствă педагогикă институтĕнчи, йалхуçалăх институтĕнчи, йалхуçалăх коммунисла аслă шкулĕнчи, йалхуçалăх тата педрабфакри студентсен, профессăрсемпе преподавательсен, çавăн пекех Шупашкар хулинчи иккĕмĕш суйлав округне кĕрекен ытти обшчĕствăлă организацисен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ,—вăл пухура 2000 çын пулнă,—Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв йулташ,—1890 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Мускав хулинче пурăнать,—кандидатурине регистрацилес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйи тăрăх, Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв кандидатурине Шупашкар хулинчи 2-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх суйлав бюллетенне кĕртес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйи тăрăх çак постановленине пурте пĕлсе тăма пичетлесе кăларас.

Округри суйлав комиççи председателĕ—Васильйĕв.

Председателĕн заместителĕ—П. И. Круглов.

Комиççи секретарĕ Димитрийĕвă.

Комиççи членĕсем: С. К. Столяров, Т. В. Васильйĕвă, Кузнецов.

Мускав, Кремль ПСК(б)П Тĕпкомне

Иосиф Виссарионăвич Сталина

Хаклă тус, çулпуç тата учитĕл

ИОСИФ ВИССАРИОНĂВИЧ!

Вунпилĕк пин çынлă митинг—Шупашкар хулинчи ĕççыннисен Есĕр, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ панă май хăйсен савăнăçне тата мухтавне пĕлтерме пухăннă демонстрацийĕ, Сире, хаклă Сталин йулташ, хĕрӳллĕн саламлать, есĕр пирĕн республикăна пысăккăн хисепленĕшĕн сире тав тăвать.

Пирĕн партин ленинла-сталинла наци политикине пула, чăваш халăхне вырăс халăхĕ кулленех пысăк пулăшу парса пынипе, Чăваш республикине ĕççыннисен йуратнă çулпуçĕ, ашшĕ тата тусĕ—Аслă Сталин ырма пĕлмесĕр пулăшса пынипе, Чăваш халăхĕ, пирĕн аслă çĕршывăмăрти ытти пур халăхсем пекех, капиталисăмăн пусмăрлăхĕпе чуралăхĕнчен хăтăлчĕ, економикăпа культура тĕлĕшĕнчен кайа йулса пынине пĕтерчĕ, культурăлă ирĕклĕ, телейлĕ пурăнăçпа пурăнма пуçларĕ.

Чăваш халăхĕ, нумай нацилĕ аслă Совет Сойузĕнчи ытти пур халăхсем пекех, большевикла партин Тĕп Комитечĕ, йуратнă çулпуç Сталин йулташ тавра ниxăçанхи пек мар çирĕп, тачă пĕтĕçнĕ, халăхсен йуратнă çулпуçне, социалисăмăн асларан та аслă çĕнтеревĕсене тума хавхалантаракана, халăхсен аслă хартине—Конституцине генилĕ туса паракана—Аслă Сталина Чăваш АССР Верховнăй Советне пĕрремĕш депутата суйлани хăйĕншĕн пит те пысăк телей, савăнăç, мухтав тесе шутлать.

Пĕтĕм Чăваш халăхĕ йачĕпе Сире çакна каласа шанăç паратпăр: Социалисăмла строительствăн пур участкисенче те вăйа хурса ĕçленипе, Ленин—Сталин партийĕ тавра таччăн пĕтĕçнипе, социалисăмла аслă çĕршывăм çине тăшман кăшт та пулин тапăнма хăтлансан хайаррăн, çĕмĕрсе тăкмалах таврăса ответ пама хатĕр тăнипе, епĕр Есĕр пире пысăк хисеп тунине тивĕçлĕ пулăпăр, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне коммунисссемпе партире тăманнисен никам ишĕлтерейми çирĕп суйлав Сойузĕн никĕсĕ çине тайăнса ирттеретпĕр, хамăр сасăсене коммунисссемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсене, чаплă совет патриочĕсене, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, коммунисăмшăн кĕрешекенсене паратпăр.

Сывă пултăр пирĕн аслă тăван çĕршыв—Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕ!

Сывă пултăр Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ!

Сывă пултăр ĕççыннисен тата пĕтĕм тĕнчери пусмăрта пурăнакансен йуратнă çулпуçĕ, тусĕ тата учителĕ пирĕн тăван Сталин йулташ!

Мускав, Кремль, Халăх Комиссарĕсен Советне

ВЙАЧЕСЛАВ МИХАЙЛĂВИЧ МОЛĂТĂВА

Вунпилĕк пин çынлă митинг—Шупашкар хулинчи ĕççыннисен Есĕр Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пана май хăйсен савăнăçне тата мухтавне палăртма пухăннă демонстрацийĕ, Сире хĕрӳллĕн саламлать, Есĕр пире пысăккăн хисепленĕшĕн тата шаннишĕн тав тăвать.

Ленинла—Сталинла наци политики тăрăх, Есĕр, Совет Правительствин пуçлăхĕ пулса тăрса, советлă Чăваш республикине кулленех пулăшу парса пырса, ăна чечеклентерессишĕн ырма пĕлмесĕр тăрăшрăр. Чăваш халăхĕ, пирĕн социалисăмла аслă çĕршывăмăран ытти пур халăхсем пекех, капиталисăм пусмăрĕнчен, çынна çын кирек те мĕнле експлоатацилессинчен хăтăлчĕ, телейлĕ, пуйан тата культурăлă пурнăç турĕ.

Чăваш республикин столицинчи—Шупашкар хулинчи ĕççыннисем сире, Ленинăн шанчăклă вĕренекенне, Сталинăн пĕр иккĕленмесĕр ĕçлекен соратникне, мĕн пур вăйхала коммунисăм ĕçне, ĕççыннисен ĕçне хуракана, пирĕн большевикла партин тата Совет влаçĕн чи паллă организаторне тата руководителне, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма мухтавлăн, вĕçĕмсĕр савăнса шанаççĕ.

Епĕр Шупашкар хулинчи ĕççыннисен йачĕпе çакна каласа шанăç паратпăр: епĕр социалисăм строительствин пур участкисенче те тата лайăхрах, паранса, вăй-халăма темиçе хут ӳстерсе ĕçлетпĕр, социалисăмла тăван çĕршывăн пур тăшманĕсемпе те хайаррăн кĕрешетпĕр, социалисăм çĕршывĕн оборонине тĕреклететпĕр.

Сывă пултăр Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ!

Сывă пултăр Советлă державă правительствин пуçлăхĕ—Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв!

Сывă пултăр ССР Сойузĕнчи халăхсен никам ишĕлтерейми çирĕп пĕрлĕхĕ!

Лазарь Моиçейĕвич Каганович йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрацилене

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Улатăрти 89-мĕш номĕрлĕ чукунçул суйлав округĕнчи суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Лазарь Моиçейĕвич Кагановича

регистрацилесси çинчен йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен округри суйлав комиççине килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, çав документсем „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 48, 49, 50 тата 52-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳллĕ пулнине палăртса, округри суйлав комиççи çапла йышăнать:

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 51-мĕш статйи тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Улатăрти 89-мĕш номĕрлĕ чукунçул суйлав округĕ тăрăх баллотировкă тума депора, Улатăр станцин пăравуссен уйрăмĕнчи ĕçлекен рабочисен, служăщчисен, инженерсемпе техниксен тата транспăртăн вĕренӳ комбиначĕн студенчĕсен пухăвĕсем (мĕн пурĕ 806 çын пулнă) Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидата, социалисăмла транспăртпа промышленнăç ӳсĕмĕсен чаплă организатăрĕн, совет халăхĕ чĕререн йуратакан сталинла Наркомăн Лазарь Моиçейĕвич Кагановичăн,—1893 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Мускавра пурăнать,—кандидатурине регистрацилес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйи тăрăх, Лазарь Моиçейĕвич Каганович кандидатурине Улатăрти 89-мĕш номĕрлĕ чукунçул суйлав округĕ тăрăх суйлав бюллетенне кĕртес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 55-мĕш статйи тăрăх, çак постановленине пурте пĕлсе тăма пичетлесе кăларас.

Округри суйлав комиççи председателĕ Поляков.

Председател заместителĕ—Чиганайĕв.

Комиççи секретарĕ—Павлăвă.

Комиççи членĕсем: Кочетков, Рйабушкинă, Мичурин, Талдыкин, Сергейĕвă, Кабайовский.

Климент Йефремăвич Ворошилăва Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Мушарти 65-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Климент Йефремăвич Ворошилăва

регистрацилесси çинчен йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратни çинчен округри суйлав комиççине килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, çав документсем „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 48, 49, 50 тата 52-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳлĕ пулнине палăртса, округри суйлав комиççи çапла йышăнат:

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 51-мĕш статйи тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Мушарти 65-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма „25 лет Октября" колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕ палăртнă тата округри суйлав умĕнхи пуху хута кĕнĕ кандидатурăна, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă Климент Йефремăвич Ворошилăв,—1881 çулта çуралнă, ПСК(б)П Тĕпкомĕн Политбюро членĕ, ССРС Оборона Халăх Комиссарĕ, Мускавра, Кремльре пурăнат,—кандидатурине регистрацилес.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйи тăрăх, Климент Йефремăвич Ворошилăв йулташ кандидатурине Мушарти 65-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх суйлав бӳллетенне кĕртес.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин 55-мĕш статйи тăрăх, çак постановленине пурте пĕлсе тăма пичетлесе кăларас.

Округри суйлав комиççи председателĕ **Г. Ф. Çмирнов.**

Председателĕ заместителĕ **С. И Баранăв.**

Комиççи секретарĕ **К. И. Михайлăв.**

Комиççи членĕсем: **В. Г. Гаврилăв, П. К. Жаркова, Н. Й. Маçленикăв, В. Р. Романăв, А. С. Çтепанăвă.**

А. И. Микойан йулташа ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ

Йетĕрнери 19-мĕш номĕрлĕ йал суйлав округĕнчи ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен суйлав комиççи ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Анастас Иванăвич Микойана

регистрацилесси çинчен йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратни çинчен округри суйлав комиççине килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, çав документсем „ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 48, 49, 50 тата 52-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳлĕ пулнине палăртса, округри суйлав комиççи çапла йышăнат:

„ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 51-мĕш статйи тăрăх Йетĕрнери 19-мĕш номĕрлĕ йал суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума Пушнарти Мичурин йачĕпе тăракан тата Чебакри „Комбайн" колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсем (çав пухусенче 356 çын пулнă) ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă Анастас Иванăвич Микойан—1895 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, ПСК(б)П Тĕпкомĕн Политбюро членĕ, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ, Мускавра пурăнат,—йулташ кандидатурине регистрацилес.

„ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйи тăрăх, А. И. Микойан йулташ кандидатурине Йетĕрнери 19-мĕш номĕрлĕ йал суйлав округĕ тăрăх суйлав бӳллетенне кĕртес.

„ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 55-мĕш статйипе килĕшӳлĕн çак постановленине пурне те пĕлтерме пичетлесе кăларас.

Округри суйлав комиççин председателĕ **И. Григорйĕв.**

Округри суйлав комиççи председателĕн заместителĕ **И. Рыбаков.**

Çекретарĕ **М. Никитин.**

Комиççи членĕсем: **Й. Соловйова, П. Иванова, А. Йегорăв, И. Махоркин, Г. Никитина, И. Гагарин.**

Федăр Максимăвич Ваганăва Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Йетĕрнери 18-мĕш номĕрлĕ хула суйлав округĕнчи суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Федăр Максимăвич Ваганăва

регистрацилесси çинчен йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен округри суйлав комиççине килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, çав документсем „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 48,49,50 тата 52-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳлĕ пулнине палăртса, округри суйлав комиççи çапла йышăнат:

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 51-мĕш статйи тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йетĕрнери 18 мĕш номĕрлĕ хула суйлав округĕ тăрăх баллотировкă тума Йетĕрне спирт савăтĕнчи рабочисен, работницăсен, инженерла-техникла работниксен тата служăщисен пĕрлехи пухăвĕ, çавăн пекех тата "Мартăн 8-мĕшĕ", Кирăв йачĕпе тата Буденный йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен пĕрлехи пухăвĕсем,—вăл пухусенче 749 çын пулнă,—Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă Ошоссдорăн 241-мĕш номĕрлĕ çулйĕр участкин начальникĕн Федăр Максимăвич, Ваганăвăн,—1909 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Куславкка йаленче пурăнат,—кандидатурине регистрацилес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйи тăрăх, Федăр Максимăвич Ваганăв кандидатурине Йетĕрнери 18-мĕш номĕрлĕ хула суйлав округĕ тăрăх суйлав бӳллетенне кĕртес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 55-мĕш статйи тăрăх, çак постановленине пурне те пĕлсе тăма пичетлесе кăларас.

Округри суйлав комиççи председателĕ **П. П. Перлович.**

Председателĕ заместителĕ **М.С. Кочетовă.**

Комиççи секретарĕ **А. Н. Сидуганăв.**

Комиççи членĕсем: **К.Д. Иакимăвă, Ф.Г. Горбунов, Е.Н. Токсубайĕвă, Н.К. Хромăвă, Н. Ф. Макарăвă. Н. И. Филимонăв.**

Николай Иванăвич Йежова Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чурачăкри 37-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Николай Иванăвич Йежова

регистрацилесси çинчен йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен округри суйлав комиççине килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, çав документсем „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 48, 49, 50 тата 52-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳлĕ пулнине палăртса, округри суйлав комиççи çапла йышăнат:

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 51-мĕш статйи тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Чурачăкри 37-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх баллотировкă тума „Красная Чувашия", „Красный самолет", „Камай" колхоз колхозникĕсен пĕрлехи пухăвĕсем, çавăн пекех тата Чурачăк суйлав округĕнчи колхозниксемпе ĕççынни общĕствисен представителĕсен округри канашлăвĕ,—вăл пухусемпе канашлура 1317 çын пулнă—Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă ССР Сойузĕн Шалти Ĕçсен тата Шыв Транспăрчĕн Халăх Комиссарĕн Николай Иванăвич Йежовăн,—1895 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Мускавра пурăнат,—кандидатурине регистрацилес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйи тăрăх, Николай Иванăвич Йежов кандидатурине Чурачăкри 37-мĕш суйлав округĕ тăрăх суйлав бӳллетенне кĕртес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 55-мĕш статйи тăрăх, çак постановленине пурне те пĕлсе тăма пичетлесе кăларас.

Округри суйлав комиççи председателĕ **С. Ф. ФЕДĂРĂВ.**

Председателĕ заместителĕ—**ГРИГОРЙĔВ.**

Комиççи çекретарĕ—**ПЕТРОВ.**

Комиççи членĕсем: **Йакимăв, Çергейĕв, П. Çеменăв, Йефремăв, Сапожникăв, Ф. Çеменăв.**

Михаил Михайлăвич Михайлăва Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шăхасанти 51-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи суйлав комиççи Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Михаил Михайлăвич Михайлăва

регистрацилесси çинчен йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен округри суйлав комиççине килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, çав документсем „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 48, 49, 50 тата 52-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳлĕ пулнине палăртса, округри суйлав комиççи çапла йышăнат:

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 51-мĕш статйи тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шăхасанти 51-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх баллотировкă тума „Соревнование", „Красный партизан", „Прожектор", Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен пĕрлехи пухăвĕсем,—вăл пухусенче 332 çын пулнă, Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Шăхасан районĕнчи уйрăмĕнче ĕçлекен Михаил Михайлăвич Михайлăв,—1909 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Шăхасанта пурăнат,—кандидатурине регистрацилес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйи тăрăх Михаил Михайлăвич Михайлăв кандидатурине Шăхасанти 51-мĕш суйлав округĕ тăрăх суйлав бӳллетенне кĕртес.

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 55-мĕш статйи тăрăх, çак постановленине пурте пĕлсе тăма пичетлесе кăларас.

Округри суйлав комиççи председателĕ **Алексейĕв.**

Председателĕ заместителĕ **Йермолайĕв.**

Комиççи çекретарĕ—**Çергейĕв.**

Комиççи членĕсем: **Александрăв, Васильйĕв, Степанăвă, Федотăв, Питин, Михайлăвă.**

К. Д. Йакимăвă йулташа ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ

Палтайри 21-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен суйлав комиççи ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата

Кçени Данилăвнă Йакимăвă

йулташа регистрацилесси çинчен йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидат тăратни çинчен округри суйлав комиççине килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, çав документсем „ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 48, 49, 50 тата 52-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳлĕ пулнине палăртса округри суйлав комиççи çапла йышăнат:

„ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 51-мĕш статйи тăрăх, Палтайри 21-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкă тума, Буденный йачĕпе тăракан, Блюхĕр йачĕпе тăракан, Ленин йачĕпе тăракан тата „Комбайн" колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсем (çав пухусенче 332 çын пулнă) ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă Кçени Данилăвнă Йакимăвă—1906 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Йетĕрнери спирт савăтĕнче технорук пулса ĕçлет, Йетĕрнери спирт савăтĕнче пурăнат,—йулташ кандидатурине регистрацилес.

„ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 56-мĕш статйи тăрăх, К. Д. Йакимăвă йулташ кандидатурине Палтайри 21-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ тăрăх суйлав бӳллетенне кĕртес.

„ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 55 мĕш статйипе килĕшӳлĕн çак постановленине пурне те пĕлтерме пичетлесе кăларас.

Округри суйлав комиççин председателĕ **Степанăв.**

Председателĕ заместителĕ **К. М. Михайлăв.**

Çекретарĕ **А. П. Степеркин.**

Комиççи членĕсем: **П. А. Стрелникăв, И. П. Смеловă. М. Н. Чурбанăв, М. Й. Иеремейĕвă. П. М. Анюхинă, П. И. Ильйин.**

Суйлав йĕркине пур суйлавçăсен те пĕлмелле

Иртнĕ 1937-мĕш çулти декабĕр уйăхĕн 12-мĕш кунĕнче Совет халăхĕ çĕнĕ суйлав саккунĕ тăрăх хăйĕн чи аслă влаç органне—ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйларĕ.

Вăл кун пĕтĕм Совет халăхĕшĕн пысăк савăнăçлă чаплă праçник пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен тĕнче историнче, егем историнче ку таранчен ун пек чи демократилĕ суйлав пулман, пулма та пултарайман. Ун пек суйлав социалисăм государствинче анчах пулма пултарат, ун пек демократилĕ суйлав саккунĕ вăл коммуниссен парти йертсе пырса, аслă çулпуç Сталин йертсе пырса, пирĕн государствăра социалисăм йĕрки çирĕпленсе ларнипе кăна пулма пултарчĕ.

Мĕн ĕмĕртенпе пынă ылханлă капиталисăм пусмăрлăхĕнчен Октабĕр революцинче хăтăлнă халăх çак çирĕм çул хушшинче хăй вăльли телейлĕ, савăнăçлă пурнăç турĕ, вăл Сталинла Конституци паракан правасемпе совет влаçĕн чи аслă органне пурне те тивĕç, пĕртан тата тӳрех суйламала правапа вăрттăн сасăлас суйлав йĕркипе уса курса, пысăк уйав туса ирттерчĕ.

Çав уйав кунĕ ирхине 6 сехетрен пуçласа çĕрле вуникĕ сехете çитиччен совет çĕршывĕнчи телейлĕ халăх парти ĕçĕшĕн, халăх ĕçĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлекен чаплă ывăл-хĕрĕсемшĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн хăйĕн мĕнпур сасне пачĕ.

Пĕтĕм совет çĕршывĕнчи халăх ун чухне Советла Социалисăмла Республикăсен Сойузĕн Верховнăй Советне суйларĕ, хальхи суйлавра çав вуннĕр сойузлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене тата Автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленет.

Пирĕн Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикăри суйлавçăсем ийунĕн 26-мĕш кунĕнче РСФСР Верховнăй Советне тата Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлаççĕ.

Ийунĕн 26-мĕш кунĕнче кашни суйлавçă ирхинехи ултă сехетпе çĕрлехи 12 сехет хушшинче хăй кăмăл тунă вăхăтра сасăлама палăртса уйăрса хунă суйлав участкин çуртне кайса, сасăлама пултарат. Суйлав кунĕнче тĕрлĕ чăрмавсем ĕçе ан кансĕрлеччĕр, тĕрлĕ йанăшсем ан пулччăр тесе, суйлавçăсен спискине тĕплĕн, йĕркелĕ çырса хатĕрлемеле. Çав спискĕсене кĕртмесĕр пĕр суйлавçăна та хăварма йурамаст. Кăна çеç те мар, спискăра пур суйлавçăсен те хушамачĕсем, хăйсен йачĕсем, ашшĕ йачĕсем тĕрĕс пулмала. Иртнĕ суйлав вăхăтĕнче çакăн çине хăшпĕр йалсоветсенче, хула совечĕсенче ĕçлекенсем çийелтен кăна пăхнипе, нумай йанăшсем туса пĕтернĕ, нумай çĕрте суйлавçăсен спискисене тепĕр хут çырмала пулнă. Ку ĕç çине çийелтен пăхнисем хăшпĕр çĕрте хальхи суйлавра та палăраççĕ. Сăмахран каласан, Йĕпреç районĕнчи Мăрат йалсоветĕнче суйлавçăсен спискин бланкисене пăсса пăрахма ĕлкĕрнĕ, йе тата Шупашкар районĕнчи Йакимăвкă йалсоветĕнче ĕçлекенсем суйлавçăсен спискине туса хăйсене чăрмантарма шутламаççĕ. Ăçта сирĕн суйлавçăсен списки?—тесе ыйтсан: пирĕн ĕлĕкхи суйлавран йулнă спискăх аван, çĕнĕрен тумасан та йурат—тесе лараççĕ.

Ак йепле çынсем тупăнкалаççĕ хăшпĕр çĕрте.

Суйлавçăсен спискине тĕрĕс çырса хатĕрленине, унта пур суйлавçăсене те тĕрĕс çырса ӳкернине, ăна вăхăтра, суйлавччен 30 кунран кайа хăвармасăр, урăхла каласан, май уйăхĕн 26-мĕш числинчен кайа хăвармасăр, унпа пĕтĕм халăха паллаштарма ăна йе курăнмала çĕре çаксa, йе урăхла майпа суйлавçăсене паллаштармала. Вăл спискăра хальхи суйлав вăхăтĕнче 18 çул тултаракансене кĕртмесĕр хăвармала мар. Унтан тата, суйлавçăсен спискине çырса пĕтернĕ хыççăн, суйлав кунĕччен тепĕр çĕре тухса кайакан суйлавçăсен йалсовечĕсене, хула совечĕсене урăх çĕре тухса кайни çинчен спискăра паллă тутарттарса, сасăлама права паракан удостоверени илмеле.

Çаксене питех те тĕплĕн туса пымали çинчен суйлавçăсене лайăххăн ăнлантармала, вăл йĕркене пур суйлавçăсен те тĕплĕн пĕлмеле. Суйлав участкине суйлав иртерме, сасăлама кайнă чух, суйлавçă хăй камне ĕнентерекен документа илсе каймала. Суйлавçă участкăри суйлав комиççийĕ ĕçлекен çĕре пырсa çав хăй камне ĕнентерекен документа (йе паспăрт, йе колхоз кĕнеки, йе профсойуз билечĕ, йе тата йепле те пулин урăх хăй камне ĕнентерекен документ) участкăри суйлав комиççи çекретарне йе суйлав комиççи членне кăтартат. Вара суйлав комиççи çекретарĕ, йе суйлав комиççи членĕ суйлавçăсен спискине тĕреслесе пăхса, вăл суйлавçă хушаматне тупат те суйлавçăсен списки çинче паллă тăват, суйлавçăна суйлав бӳллетенĕсемпе конвертсем парат. Иртнĕ суйлавра Совет Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă чухне облăçсенче, сăмахран, Мускавра, Мускав облăçĕнче, Ленинградра, Ленинград облăçĕнче, Горьки, Иванăвă облăçĕсенче тата çавăн пек ытти облăçсенче суйлавçăсем икĕ бӳллетенпе сасăланă. Автономлă республикăсенче, автономлă облăçсенче тата нацилĕ округсенче суйлавçăсем виçĕ бӳллетенпе сасăланă. Хальхи суйлавра крайсенче, облăçсенче, автономлă облăçсенче, тата нацилĕ округсенче суйлавçăсем пĕр бӳллетенпе РСФСР Верховнăй Советне кăна суйлаççĕ, автономлă республикăсенчи кашни суйлавçă икĕ бӳллетенпе сасăлат: пĕр бӳллетенпе (çутă-кăвак тĕслипе)—РСФСР Верховнăй Советне суйламали кандидатшăн, тепĕр бӳллетенĕпе—(шурă тĕслипе) Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали кандидатшăн. Çавăнпа кашни суйлавçă пирĕн Чăваш республикинче икĕ бӳллетенпе икĕ конверт илет, конверчĕсем çав çӳлте каланă тĕслисем пулаççĕ.

Кашни суйлавçăн çакна манмала мар: вăл икĕ бӳллетенпе икĕ Верховнăй Совета суйлат, пĕринпе—РСФСР Верховнăй Советне, тепĕр бӳллетенĕпе Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлат.

Бӳллетенсемпе конвертсене илсессĕн, суйлавçă суйлав бӳллетенĕсене тултарма уйăрнă пӳлĕме кĕрет, унта хăй камшăн сасăластет, çав кандидатăн хушаматне хăварат, ыттисене хуратса хурат. Вара бӳллетенсене, бӳллетен тĕслĕ конвертсем ăшне чиксе хурса, конверчĕсене çыпăçтарат те, вăл пӳлĕмрен тухса ăшне бӳллетен чикнĕ конвертсене суйлав йешчĕкĕсене йарат. Кашни суйлав участкинче икшер суйлав йешчĕкĕсем пулаççĕ: РСФСР Верховнăй Советне суйлама расна йешчĕк, Чăваш республикĕн Верховнăй Советне суйлама расна йешчĕк. Йешчĕкĕсем çине: пĕрин çине „РСФСР Верховнăй Советне суйламали суйлав йешчĕкĕ" тесе, тĕприн çине „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав йешчĕкĕ" тесе, çав çӳлте кăтартнă бӳллетенсемпе конвертсем тĕслĕ хут çине çырса çапнă, çавăнпа йешчĕксем çине мĕнле тĕслĕ хутпа çырса çапнă, çав тĕслĕ конвертсене вăл йешчĕке йарас пулат. Ăна пăтраштарма кирлĕ мар.

Пирĕн суйлав саккунĕ граждансене (судпа суйлав прави çухатманнисене) пурне те суйлав ĕçне хутшăнма май парат. Тĕрлĕ çитменлĕхпе: хут пĕлменлĕхпе, пӳ-çири мĕнле те пулин çитменлĕхпе хăйсем тĕллĕн суйлав бӳллетенне тултарма пултараймаççĕ пулсан, хăйне пулăшма тепĕр çын—суйлавçăна илсе кĕрсе, суйлав бӳллетенне тултарса сасăлама пулат йе тата тĕрлĕ сывалмали çуртсенче, пульницăсенче, санаторисенче, канмали çуртсенче, ача çуратмали çуртсенче, пассажирсене турттарса çӳрекен пойăссем çинче, пăрахутсем çинче, тĕрлĕ суднăсем, карапсем çинче уйрăм суйлав участкисем туса, суйлавçăсене суйлав ĕçĕнче хутшăнма май параççĕ.

Пирĕн суйлав ĕçĕ—вăл пĕтĕм халăх ĕçĕ, епĕр государствăн аслă влаç органне суйлакан çынсем пĕтĕм халăхăн йуратнă ывăл-хĕрĕсем, вĕсем халăх ĕçĕшĕн чунне-пурнăçне хума хатĕр çынсем, çавăнпа та коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок çакçитес суйлав кампанинче татах çирĕпленет, хăйĕн никам çĕнтерейми вăй-хăватне татах та туллийĕн кăтартат.

Совет халăхĕ фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла агĕнчĕсене тата ытти тĕрлĕ халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкса, государствă аппаратне кĕрсе чиновниклене, бӳрократланса, пăнтăхса сăтăр туса ларакансене тĕппипе шăлса тасатрĕ. Вăл государствă влаçĕн рульне тытса пыма Ленин çулĕпе пĕр пăркаланмасăр пыракан çынсене кăна, тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр йуратса тăракан çынсене кăна, Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр йуратса тăракан çынсене кăна, халăх интересĕсемшĕн тăрăшса ĕçлекен, социалисăм ĕçĕшĕн хăйĕн мĕн пур вăйне парса ĕçлекен çынсене кăна лартат".

Влаçăн Верховнăй органне—халăхăн чи лайăх ывăлĕсене!—акă пирĕн суйлав кампанинчи лозунг.

Т. ВАÇИЛЙĔВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммуниссене воспитани парас тĕлĕшпе райком çителĕксĕр ĕçленĕ

ШĂХАСАН. Районри парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ майăн 20-мĕшĕнче ПСК(б)П райком ĕçĕсем çинчен райком çекретарĕн—Федăрăв йулташăн отчотлă докладне итлерĕ.

Отчот тăрăх тухса калаçакансем райкомăн кулленхи ĕçĕнчи çитменлĕхсене палартрĕç.

Коммуниссене политикăлă воспитани парас тĕлĕшпе райком çителĕклĕ ĕçлемен. Уйрăм коммуниссем начар вĕренсе пынă, йе пачах вĕренмен пулсан та, парти райкомĕ вĕсем пирки кирлĕ мерăсем йышăнман. Парткабинета çителĕклĕ йертсе пыман. Райком инструктăрĕсем уйрăм коммуниссемпе начар ĕçленĕ, вĕсене вĕренме, заĵатисене хатĕрленме пулăшман. Çавăн пекех пуçламĕш организацисемпе йертсе пырасси те çителĕклĕ пулса пыман. Парторгсемпе уйрăм ĕçлессине манăçа хăварнă, вĕсене пурне те пĕр тана хурса, вĕсемпе пĕртан ĕçлесе пынă. Парторгсен замеçтителĕсем чылай çĕрте формалĵнă çеç шутланса тăнă. Райком вĕсемпе совешчанисем, çеминарсем туса иртермен. Ентрийалĕнчи, райĕçтăвкомри, МТС-ри пуçламĕш организацисенче, райком инструктăрĕсем нумай вăхăт хушши пулман.

Комсомолпа йертсе пырас ĕç нумай аванланнă. Анчах парти райкомĕ райкомолăн кулленхи ĕçне çителĕклĕ тĕрĕслемест.

Районри хаçатăн ĕçĕнче сахал мар çитменлĕхсем пур. Райком редакци ĕçне аванлатассипе лайăх решенисем йышăннă, анчах çав решенисене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемен.

Совет, хуçалăх, хатĕрлев, сутуилӳ тата ытти обшчĕствăлă организацисемпе йертсе пырасси кирлĕ вырăнта мар. Райĕçтăвком пайĕсем, йалсовет çекцисем çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Укçа-тенкĕ пухассин çулталăк планне 30 процент ытларах çеç тултарнă, аш-какай хатĕрлес плана—26 проц., сĕт-çу хатĕрлессине 22 проц. тултарнă.

Пуху райком отчочĕ тăрăх решени йышăнчĕ, райкомăн çĕнĕ составне татăклă ĕçсем тума хушса хăварчĕ. Райкомăн политикăлă çул-йĕрĕ тĕрĕс, практикăлă ĕçĕ çителĕклĕ, тесе хак пачĕ пуху.

Майăн 21-мĕшĕнче пуху суйлавсем çине куçрĕ. Райком членĕсене 9 çынран суйлама йышăнчĕç. Вĕсене суйлама 17 кандидатура тăратрĕç. Вĕсенчен вара иккĕшне хăйсем ыйтнипе спискăран кăларчĕç. Райком составне 4 член çĕнĕрен суйланчĕç.

Райком пленумĕн пĕрремĕш ларăвĕ майăн 22-мĕшĕнче пулса иртрĕ.

ПСК(б)Парти райкомĕн пĕрремĕш çекретарне С. М. Никитин йулташа, иккĕмĕш çекретарне С. О. Ашмарин йулташа, виççĕмĕш çекретарне А. З. Сорокин йулташа суйларĕç.

Соколов.

Куславкка районĕнчи парторганизацин пухăвĕ

КУСЛАВККА. Майăн 26-мĕшĕ (телефон тăрăх, хамăр корр.). Обком отчочĕ тăрăх пренире 30 çын тухса калаçрĕç. Пренире тухса калакансем парти Чăваш Обкомĕн çĕнĕ руководстви халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туни çинчен, партипе хуçалăх руководствине çĕнĕ кадрсемпе çирĕплетсе лайăхлатни çинчен каларĕç. Çакăнпа пĕрлех парти Обкомĕ халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине те палăртрĕç.

Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Куславкка комбиначĕ çумĕнчи парторганизаци çителĕксĕр ĕçлесе пырат. Комбинат хăйĕн производствăлă планне тултарса пыраймаст. Комбината йертсе пыракан пуçлăхсем „сырйо çук" тесе лăпланса ĕçленĕ. Халĵ сырйо пур, „рабочисем çук" тесе хăйсене хăйсем лăплантараççĕ.

— Пирĕн, производствăлă плана тултарас пулсан, 400—500 рабочи кирлĕ, — тет комбинат директăрĕ Никитин йулташ.

Кунта рабочисен пурнăçпа йăла услови питĕ начар, рабочисем пурăнмали çуртсене сăтăрла тунипе, халĵ пушшех йухăнтарса йанă. Канализаци тунă çĕрте пĕр мĕлйун тенкĕ ытла расхутланă пулсан та, канализаци пайан кун та ĕçлемест. Çавнашкалах шыв пăркине те сăтăрла тунă. Комбинатри пуçлăхсем хăйсен айăпĕсене трест çине йăвантарма пăхаççĕ. Браксем нумай тăваççĕ, пахалăхшăн кĕрешмеççĕ. Стахановецсен йышĕ чакса пырат.

Районри парторганизаци пухăвĕнче Никăнăв йулташ: „Сăтăрçăсем комбинатра çук, вĕсем урăх çĕрте" тесе пухăва лăплантарма пăхрĕ. Комбинатра партилĕ политикăлă ĕçе те çителĕклĕ вырăна лартман. Çулталăк хушшинче партком çекретарне 4 хут улăштарнă.

Пухура тухса калакансем районри суту-илӳ тата ытти организацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене чылай критиклерĕç.

П. Перлов.

Трак райкомĕн çĕнĕ составĕ

ТРАК. (Хамăр корр.). Майăн 23-мĕшĕнче районри парторганизацин пухăвĕ суйлав ыйтăвĕсене татса пачĕ. Пуху парти райкомне 9 членран суйламала йышăнчĕ. Вăрттăн сасăлама 15 кандидат тăратрĕç. Кашни кандидатран автобиографине итлесе, тĕплĕн сӳтсе йаврĕç. Вăрттăн сасăламали спискăна 12 кандидат хăварчĕç.

Райком составне ĕçре хăйсен пултарулăхне кăтартнă, 9 коммунис суйланчĕç, вĕсенчен çĕнĕрен, пирвайхи хут суйланнисем 4 коммунис.

Райком хăйсен малтанхи ларăвĕнче райкомăн пĕрремĕш çекретарне Свешникăв йулташа, иккĕмĕш çекретарне Кондратйĕв йулташа, виççĕмĕш çекретарне Тихăнăв йулаша суйларĕ. Райком членне И. Йефимăв йулташа районри хаçат ретактăрне çирĕплетрĕç.

Килхуçисем патĕнче

— Агитатăр йулташ!—терĕ Софйа Прибылова.—Пайанхи заĵатине пӳртре мар, пахчара иртерме шутларăмăр епĕр.

— Йурат вара. Питĕ аван. Хăвăр килĕшетĕр пулсан, епĕ хирĕç мар.

— Килĕшетпĕр çав. Усă çĕре тухас. Çанталăк ытла та аван вĕт,—терĕ Агафйа Попова. Варварă Петрова та çав сăмахах каларĕ.

Часах пӳртрен виçĕ карчăк, вĕсен хыççăн агитатăр тухса, хыçалти калинке йеннеле утрĕç.

Калинкерен тухсанах:

— Акă,—терĕ Софйа,—хам лартса ӳстернĕ сат пахчи. Улмуççисем пурте Мичурин йышшисем. Пурте çеçкере ав.

Сат шап-шурă çеçкере. Сатри йем-йешĕл çерем çине кавир сарса пачĕ Софйа. Карчăксем çепĕççĕн йăпшăнса ларчĕç. Суйлав саккунĕ çинчен калаçу, тутлă калаçу пуçланчĕ. Агитатăр сăмахĕсене вĕсем, кисеплĕ карчăксем-суйлавçăсем, йаланхи пекех шăппăн, куçран шăтарас пек пăхса итлеççĕ. Итлесе ларсан-ларсан:

— Вара, çапла çав, тĕрĕс,—тесе илеççĕ.—Пĕлетпĕр ĕнтĕ. Манман. Иртнĕ суйлав вăхăтĕнче те лайăх ăнлантарчĕç.

Хăйсен обйазаннăçĕсене лайăх пĕлеççĕ вĕсем. Час-часах иртнĕ суйлав кунне, иртнĕ çулхи декабĕрĕн 12-мĕш кунне, пысăк хавхаланупа аса илеççĕ:

— Епĕ вăл кунхине,—тет Агафйа,—çемйере пуринчен те малтан тăтăм. Йăшка-çăкăр хатĕрлерĕм. Чей вĕретрĕм. Ывăлăма, кинĕме вăратрăм. Апатлантăмăр. Тухса кайма хатĕрленнĕччĕ. Пăхатпăр: пирĕн пӳрт умне çăмăл машинă килсе тăнă. Çигнал парат. Пире йахăрат. Вара, çуран та утма ӳркенместĕп, суйлав участки инçех мар вĕт, тетĕп. „Çук, тет шофĕр, сана çуран уттарас мар терĕмĕр, асанне", Мĕн тăвас тетĕн-ха, вара. Ларса кайрăмăр. Лере çитсессĕн тата, алă çинче çĕкленĕ пек, çĕклесе антарчĕç. Ну-и пурнăç, тесе шутлатăп хам. Маншăн вĕт, 78 çула çитнĕ карчăкшăн, çапла тăрăшаççĕ. Ăçта, тата хăш çĕршывра пулма пултартăр çакнашкал пысăк чыс, пысăк хисеп?

— Есĕ вĕренӳ прави çинчен каларăн,—тет Варварă Петрова, агитатăр çине пăхса.—Епĕ те каласшăн. Çав правапа хамăн çемйе мĕнле усă курни çинчен каласа парасшăн.

— Манăн сакăр ача пулнă. Вĕсем пурте сывă пайан кунччченех. Чи аслă хĕрĕм 60 çулта. Вăл, мĕскĕн, хам пекех вĕренмесĕр йулнă. Ун хыççăнхи ывăлăм 34 çула çитсен, Аслă Октăбĕр хыççăн, вĕренме пуçларĕ. Халĕ вăл техник-инженер. Ногинск хулинче ĕçлет. Тепĕр ывăлăм машинис помошникĕ. Хусан—Мускав чукунçулĕ тăрăх çӳрет. Тăваттăмĕшĕ—врач. Ыттисем халĵ пурте аслă шкулсенче вĕренеççĕ. Çулталăка пĕр хутчен, отпуск каникул вăхăтĕнче, пурсăмăр та пĕрле пулатпăр епĕр. Вара каласса та пĕтерейместпĕр. Епĕ хамăн ачалăх мĕнле хурлăхра, асаплăхра иртни çинчен час-часах каласа паратăп вĕсене. Вĕсем—хăйсем çинчен, халĵхи хаваслă тапхăр çинчен. Чĕрempe-чунăмпа çĕкленсе халхаланатăп, хавасланатăп хамăн ачасемшĕн. Чĕрempe-чунăмпа çĕкленсе мухтатăп çак телейлĕ те чечеклĕ, аслă çĕршывăма. Сталинла саккуншăн хĕпĕртетĕп, уншăн, вăл саккуншăн алă çĕклетĕп. Çитес суйлавра чи малтанах уншăн, Аслă Сталиншăн сасă паратăп.

Малали сăмаха Софйа илет. Вăл ĕç прави çинчен, кану прави çинчен—вăл правасемпе мĕнле усă курни çинчен калат. Çав вăхăтрах Хĕрлĕ Çар ретĕнче, командирсем хатĕрлекен шкулра вĕренекен ывăлне те аса илет. Ывăлĕ ăна нумай пулмаст çыру йанă. Пур предметсемпе те лайăх паллăсем илсе пыни çинчен хаваслансă пĕлтернĕ.

Калаçу малала тăсăлат. Шупашкар çулсеренех çĕнелсе пыни çинчен те калаçаççĕ. Хăйсем пурăнакан Йарославскайа урам çинчен те, вăл урамри ĕмĕрхи пылчăк, тăнкăр-танкăр çул тахçанах куçран çухални çинчен... Вĕсем çине пăхсассăн татах та калаçнăçемĕн каласас килет. Вĕсен сăнĕсенче ватлăх кăмалĕн пĕр паллине те туймастăн. Вĕсен сăнĕсенче телейлĕ хаваслăх—социалисăмла çĕршыв граждăнĕсене тивĕç хаваслăх çиçсе йалкăшат. Умра виçĕ карчăк. Виçĕ суйлавçă. Суйлав саккунĕсене вĕренетпĕр.

Епĕр çат пахчинче. Улмуççисем шап-шурă çеçкере.

Митта Петерĕ.

Йаманкасси йалсовечĕн çекцийĕсем

Канаш районĕнчи Йаманкасси йалсовечĕ çумĕнче пурĕ 11 çекци.

Финанс çекцинче 16 çын. Çекцине Роман Петров йулташ йертсе пырат. Ку çекци лайăх ĕçленине пула, йалсовет укçа-тенкĕ пухас плана кашни квартăлтах срукчĕн тултарса пырат. Йалсовет 1-мĕш квартăлти плана пĕтĕм тӳлевсем тăрăх срукченех 105 процент тултарчĕ.

Йалсовет халиччен тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаст, 2-мĕш квартăлта мĕн пур тӳлевсем тăрăх 1923 тенкĕ пухмала пулсан, майăн 15-мĕш тĕлне 3875 тенкĕ пухнă. Квартăл планне 300 процент ытларах тултарнă. Çекци членĕсем участкăсенче агитаци ĕçне туса пыраççĕ, укçа-тенкĕ пухас ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. С. Куçмин, П. Герасимăв, С. Маркăв, С. Филиппăв йулташсем 200—500-шер тенкĕ укçа пухса панă.

Выĵăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен çекци те аван ĕçлет. 3—4 çул хушшинче выĵăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе пысăк ӳсĕмсем пулчĕç. 1933 çулта йалсоветра лашасем 152, ĕнесем 153, сурăхсемпе качакасем 384, сыснасем 180 пуç пулнă. 1938 çулта лашасем 196, ĕнесем 250, сурăхсемпе качакасем—712, сыснасем 397 пуçа çитнĕ. 3—4 çул кайала колхозниксенчен сысна усракансем сахал пулнă, халĕ 186 хуçалăх сысна усрат, 969 вĕлле пур. Вăл шутран колхозăн 707 вĕлле, колхозниксен 244 вĕлле, йединоличниксен 18 вĕлле. Колхозра ĕнесĕр хуçалăхсем çук. Доронин йачĕпе тăракан колхозри таварлă сысна ферми çулленех ӳссе пырат. Кăçалхи çул фермăра планпа сыснасен хисепĕ 142 пуç пулмала пулсан, 300 пуçа çитнĕ. Çекци членĕсенчен Васили Таркăв йулташ нумайранпа сысна ферминче ĕçлет.

Уй-хир çекцийĕ кăçалхи болĵшевикла çураки вăхăтĕнче ĕç пахалăхĕпе агротехникăна мĕнле пурнăçласа пынине сăнасах пычĕ. Доронин йачĕпе тăракан колхоз çуракине 8 кун хушшинче пысăк пахалăхпа иртерчĕ. Вăрлăха лайăх суртласа, пĕрчĕлĕ тырăсене йаровизацилесе, пăрçала кулĵтурăсене нитрагинизаци туса 100 процентĕпех машинăпа акрĕç.

Кулĵтсекци руководителĕ Димитрий Анисăв кулĵтурă ĕçне хăпартассипе вăйлă ĕçлесе пырат. Йалсовечĕн кулĵтурă строителствинчи çитĕнӳсем пысăк. 5—6 çул кайала йалсоветра хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 100 çын ытла пулнă. Пайанхи куна хут пĕлменнисем 23 çын çеç йулнă, вĕсем пурте хут сахал пĕлекенсен шкулĕнче вĕренеççĕ. 1936 çулта туллимар вăтам шкул уçнă. Шкул çулне çитнĕ ачасем пурте шкулсенче вĕренеççĕ. Доронин йачĕпе тăракан колхозăн 400 çын вырнаçмалăх клуб пур. Çак клубра час-часах киносем, спектакăлĵсем, художĕствăлă вечĕрсем пулса иртеççĕ. Кăçал клубра 19 хутчен кино кăтартнă, курнă çерте 1690 çын пулнă. Колхозри 22 çынран тăракан драмкружок 12 пйесă выĵăса панă. Библиотекăра пĕтĕмпе 2 пин кĕнеке ытла. Халĵхи вăхăтра вулакансен йышĕ 130 çын ытла.

Йалсоветри 209 хуçалăхран пурте хаçат-журналсем илсе тăраççĕ. Йала пурĕ 191 екземплĵар хаçат-журналсем килсе тăраççĕ.

Йаманкасси йалĕ йулашки çулсенче палламала мар улшăнса çĕнелчĕ. Колхоз организацилеччен 7 хуçалăх хӳра пӳртсенче пурăннă. Йулашки виçĕ çул хушшинче колхозниксем 31 хуçалăх çĕнĕ, илемлĕ пӳртсем лартрĕç.

Колхозниксен пурнăçĕ лайăхланса, кулĵтурлăхĕ ӳссе пынине çак тĕслĕхсем кăтартса параççĕ: халĕ 12 хуçалăхăн тĕрлĕрен сехетсем, 49 хуçалăхăн çĕвĕ çĕлемели машинсем, 12 хуçалăхăн велосипедсем, 20 хуçалăхăн тĕрлĕ музăкă инструменчĕсем, 3 хуçалăхăн радио, 119 хуçалăхăн мунчасем пур.

Халĵхи вăхăтра йалсовет РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хастарлăн хатĕрленет. Суйлава хатĕрленнĕ май çекцисем те хăйсен ĕçĕсене вăйлатса пыраççĕ. Халĵхи вăхăтра суйлав Положенисене вĕрентессипе 29 агитатăр ĕçлет. Вĕсем çумне 10-шар хуçалăх çирĕплетнĕ. Йалсовет агитатăрсен ĕçне тĕрĕслесе тăрат, ĕçре пулăшат.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне клубра иртерме палартнă. Халĕ çак клубрах участкăри суйлав комиççийĕ ĕçлет. Суйлав пулмали пӳлĕмсене плакатсем, лозунгсем тата партипе правителствăн руководителĕсен портречĕсемпе илемлетнĕ. Йаманкассинчи суйлавçăсем суйлав кунне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме, пурте суйлава тухса коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлама хатĕрленеççĕ.

И. Малов.

Тагански районĕнчи (Мускав) 32-мĕш суйлав участкинчи агитпунктра.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: агитатăрсем суйлав литератури витрини патĕнче.
Л. Фавилович фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Учителсен канмали çурчĕ

Атăл-леш йенчи учителсен канмали çурчĕ майăн 11-мĕшĕнче ĕçе тытăнчĕ. Кăçалхи çул çак канмали çуртра 1.400 çын пулмала. Канакансем валĵли условисем аван. Халĵ канмали çуртăн площадкине илемлетсе пĕтереççĕ.

Выĵăхсене ирĕклĕн страхлаççĕ

Ишек (Ишлей р.) йалсоветĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем хăйсен выĵăхĕсене ирĕклĕн страхлаççĕ. Хура Çырма йалĕнчи 7 колхозник хуçалăхĕ хăйсен ĕнисене 5.300 тенкĕлĕх, Кипек-кассинчи 5 хуçалăх 4 700 тенкĕлĕх, Шăпачав йалĕнче 5 колхозник 3.400 тенкĕлĕх страхланă.

А. Наумăв.

Тĕрĕслӳ мĕнле иртет

Елĕк районĕнчи шкулсем çуркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевне ĕçе лайăх организацилесе кĕтсе илчĕç. Пĕлӳ тĕрĕслевĕн программипе пур шкулсенче те вĕренекенсене малтанах тĕплĕн паллаштарнă.

Тĕрĕслевĕн малтанхи кунĕсем вĕренекенсен пелевĕ лайăххине кăтартрĕ. Елĕкри вăтам шкулта, майăн 20-мĕшĕнче, пур классенче те заĵати вăхăтра пуçланчĕ. Х-мĕш класра вырăс чĕлхипе диктант пулчĕ. Диктантра 13 ачаран 3-шĕ „отлично", 4-шĕ „хорошо", 5 „посредственно", 1 „плохо" паллăсем илнĕ.

Йуркасри вăтам шкулта ĕç урахларах. Х-мĕш класра вĕренекен 14 ачаран вырăс чĕлхипе диктантра „отлично" паллăсем илекенсем пачах та пулмарĕç.

Майăн 23-мĕшĕнче çав шкулсенчи классенчех вырăс литературипе Çутĕç Халăх Комиссариачĕ йарса панă темăсемпе сочиненисем пулчĕç. Елĕкри вăтам шкулта Х-мĕш класра вĕренекенсем пĕрремĕшпе иккĕмĕш темăсене илсе пурте диктанта аван çырчĕç. Йанович вĕренекен Кондрат Майданникăва чăн-чăн произведенири çын пек туса çырса кăтартнă. Çавăн пекех Кириллăв, Волкăв, Бойкова вĕренекенсем те аван çырнă. Ку темăпа „отлично"—4, „хорошо"—6, „посредственно"—3 ача çырнă. Вĕсене преподавател Куçмин тăрăшса вĕрентнĕ, унăн педагогикăлă ăстăрлăхĕ пысăк. Ачасем ăна хисеплеççĕ, йуратаççĕ. IX мĕш клас вĕренӳре ытти классенчен йулараx пынă пулин те, вырăс чĕлхипе туса иртернĕ диктантра ачасем аван çырчĕç.

Аслă классенче вĕренекенсем пунктуаципе ытларах йăнăшсем туни паларат.

Елĕкри вăтам шкулта чăваш чĕлхипе Иварбейĕвă йулташ вĕрентнĕ. Майăн 23-мĕшĕнче вăл вĕрентекен VIII „б" класра диктант пулса иртрĕ. Диктант валĵли материал Тукташăн „Шурă Роза" произведенирен илнĕ. Диктантра 35 ачаран 9 шĕ „отлично", вĕсенчен 6-шĕ пĕр пунктуацилĕ йăнăшсăр çырнă. Вăл вĕрентнĕ V „А" класра диктантпа 29 ачаран 16-шĕ „отлично", „хорошо"—8, ыттисем „посредственно" паллăсем илнĕ.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕ вăхăтĕнче хăшпĕр учителсем дисциплинăна пăхăнманни те паларчĕ. Акă, Елĕкри вăтам шкулти преподавател Максимăв математикă тĕрĕслевĕ урокне 15 минут кайа йулса çитнĕ. Ку вăл ĕçе çийелтен пăхнине, пĕлӳ тĕрĕслевне хакламаннине кăтартат.

К. Ошков.

Çĕнĕ йалăн çĕнĕ çыннисем

КАНАШ. (Хамăр корр.) Социалисăмла револĵуциччен Йанкăлĵчă йалĕ тĕттĕм те начар йал пулнă. Пĕтĕм ыр ана-çарансене Йаратайпа Сăмакка çĕрме пуйансем йышăнса илнĕ. Йалĕпе 200 кил. Вĕсенчен çурри ытла пурнăçа, выçăла-тутăлăн пуранса иртернĕ. Нумайăшĕ хăйне йата ĕнĕ илсе, сĕт çисе курайман. Ĕнесĕр çынсем 69 хуçалăх, лашасăр çынсем 82 хуçалăх пулнă. Хут пĕлекен çын йалĕпе те пĕр П. Çергейĕв анчах пулнă. Çырусем вулас-тăвас йе прошенисем çыртарас пулсан, йал çыннисем пурте Çергейĕв патне чупнă. Йала револĵуциччен нимĕнле кĕнеке-хаçат та пырса кĕмен.

Хресченсене патша куланайĕсем аптратса çитернĕ. Пĕр çул хушшинче куланайшăн 15 çынăнне ĕне, 12 çынăнне сарайсем сутнă.

Револĵуци йала чĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртнĕ. 1930 çулта кунта 12 хуçалăхпа колхоз организациленет. Колхоза салатса йарассишĕн кулаксем çывăрмасăр агитациленĕ.

— Пĕрлешӳлĕ ертелре кăна епĕр хамăр телейе тупатпăр. Ленин кăтартнă çул. Пĕртен пĕр тĕрĕс çул!—кăшкăрса тăкнă чухăнсем кулаксене. Колхоз çулсерен ӳснĕ.

1937 çулта колхоз пĕтĕм агротехникă кăтартăвĕсене кирлĕ пек пурнăçласа пынипе, ĕмĕрте пулман вăйлă тырпул туса илчĕ. Колхозниксем кашни ĕçкунĕ пуçне 7,90 килограм тĕштырă илчĕç. Ĕлĕкхи вăхăтра начар пурнăçпа йухăнса пурăннă çынсем 1937 çулта 450—500-шер пăт тырă илнĕ. Йалагин колхоза кĕреччен нихçан та 20 пăтран ытла пӳлмере тырă тытса курайман. Иртнĕ çура вăл хăйĕн çемйипе 510 пăт тырă ĕçлесе илнĕ.

Йалагин — стаханăвĕц. Йалахах ĕçре хăйне хастарлă тытат.

— Аллă саккăр урлă каçрăм ĕнтĕ, халиччен хи пек нихăçан та кăмăлăм çĕкленмен. Сталин йулташ пирĕн пурнăçа кувсерен çăмăлатса пырат. Сталинла Конституци чăн-чăн çут хĕвел. Ун çине çырса хунă хамăран аслă правасемпе сарлакан усă куратпăр. Социалисăмлă уй-хирĕн маçтарĕ пуласси—тава тивĕçлĕ йат. Епĕ вăл йатшăн çапăçатăп. Спасиба Сталин йулташа çак телейлĕ пурнăçшăн,—тет Йалагин йулташ.

Вăл ĕлĕкхи вăхăтра çавĕ-çавĕпе кĕтӳ кĕтсе çӳренĕ. Хĕлле пулсан выçă ларнă. Халĕ пур йенчен те çителĕклĕ пурнăçпа пурăнат.

Йанкăлĵчă йалĕ ĕçре çитĕнсе ӳснĕ çынсен йачĕсемпе мухтанат те саванат. Акă, Норлатăв йулташ мĕн ачаранпах кĕтӳ кĕтсе çӳренĕ. 1920 çулта çеç ун хулпуççийĕ çийĕнчен вăрăм пушă илĕннĕ. Колхоза кĕрсессĕн, Норлатăв çĕнĕрен çуралчĕ. Халĕ вăл колхозра бригадир пулса ĕçлет. Унăн бригади пĕлтĕр кашни гектартан 125 пăт тĕштырă туса илчĕ.

С. Мешков йулташ 59 çулта. Иртнĕ çулта вăл пĕччен 203 ĕçкунĕ тунă. Унăн çемйи 458 пăт тĕштырă тата 300 тенкĕ укçан илнĕ.

Çавнашкалах, Йермолай Николайчă та çулĕпе çамрăк мар. 68 çулта. Вăл пĕлтĕр хăй пĕччен 470 ĕçкунĕ туса 301 пăт тырă илнĕ. Йерми мучи 6 çул ĕнтĕ колхоз хуралĕнче пурăнат. Хăйĕн ĕçне питех те лайăх пĕлет. Каçхине вăл чăлăм куç хупмасăр колхоз кĕлечĕсене сыхлат. Ăна Карпас пулăшат.

— Аслă йытă. „Кайăксене" часах шăршласа тупат. Виçĕмçул çавнашкал колхоз итемĕ çине ыраш кăшăлĕ вăрлама икĕ „кайăк" килчĕç те тытрăмăр вĕт итем çинчех Карпаспа иксĕмĕр. Колхоз тыррине пĕр пĕрчине те вăрра памастпăр. Социалисăмла пурлăха хытă сыхлатăп,—тет Йерми мучи.

Уй хир ĕçĕнче Петрова Анна та Йерми мучирен пĕртте кайа ĕçлемест. Петрова йулташ 58 çулта. Мĕн колхоза кĕнĕренпех ударницă шутланат. Тăрăшса ĕçленине кура ăна колхоз преми те пĕр хут çеç мар панă.

Петровăн икĕ ывăл. Вĕсем çĕршывăн телейлĕ çыннисем пулма тивĕç пулнишĕн Петровă çав тери хĕпĕртесе саванат. Аслă ывăлĕ Никифăр—йалсовет çыруçи, кĕçĕнни Филипп—туллимар вăтам шкулта вĕрентекен учител.

Мешков, Николайĕв, Петров йулташсем пек ватлăхра çĕнелсе çамрăклăх туйаннă çынсем колхозра вуншарăн шутланаççĕ.

Çĕрĕç техникине колхоз тĕпренех çĕнетнĕ. Колхоз пуçланнăранпа колхозниксем çурлапа тыра вырса курман, тăпачăпа аван çапман. Халĵхи вăхăтра колхозăн тыр акмали машинсем—7, тыр вырмали машинсем—3, утă çулмалй машинсем—3, çĕрулми кăлармали—2, автомашин—1, т. ыт. те.

Купăпа пĕрлех, колхозлă йалăн кулĵтурлăхĕ те вăйлăн ӳснĕ. Револĵуциччен йалта хут пĕлекен пĕр çын çеç пулнă пулсан, пайанхи куна пуçламĕш шкул пĕтерсе тухнисем—305 çын, вăтам шкулсемпе техникумсенчен вĕренсе тухнисем—22 çын, тĕрлĕрен курссенче вĕренсе вăтам пĕлӳ илнисем 55 çын, аслă шкулсенче вĕренекенсем 5 çын.

Йалта туллимар вăтам шкул пур. Унта пурĕ 270 ача вĕренеççĕ. Колхозăн хăйĕн пысăк та илемлĕ клуб пур. Унта час-часах колхозниксем вечĕрсем туса кану вăхăтне саванăçлăн иртереççĕ. Çавăн пекех ача çуратмали çурт, ача йаçли пур.

Колхозниксем пуйан пурнăç çулĕ çине тăчĕç. Ĕлĕкхи вăхăтра йалта 62 хура пӳрт пулнă. Халĕ вĕсен выранче пысăк та çутă пӳртсем лараççĕ. Пĕр çул хушшинче 25 хуçалăх çĕнĕ пӳртсем лартнă. 60 хуçалăх—ĕне выĵăхсем, 4 хуçалăх—велосипедсем, 10 хуçалăх—патефонсем, 50 хуçалăх çĕвĕ çĕлемели машинăсем туйаннă. Куçпа виçсе çитерейми хăвăртлăхпа ӳссе пырат колхозлă йал.

Куллен хаçат-журналсем вуласа пырасси йăлана кĕрсе çитет ĕнтĕ. Колхозниксем 205 екземплĵар тĕрлĕрен хаçат-журналсем çырăнса илеççĕ.

Пайанхи куна Йанкăлĵчăри Каганович йачĕпе тăракан колхозра 196 хуçалăх шутланат.

Колхозниксен пурнăçĕ кунран кун çĕнелсе, лайăхланса пынине кура, йединоличниксем пĕлтĕр 12 хуçалăх, кăçал 5 хуçалăх колхоза кĕнĕ. Вĕсем пĕччен пурнăçа вĕçĕмсĕр ылханаççĕ. Акă мĕн калать Микул мучи колхоза кĕнĕ чух:

— Çитет кун чул асапланса пурăннипе. Колхоза кĕмесĕрех ĕмĕрĕме иртеретĕп пулĕ тенĕччĕ. Çук! Пĕтĕм хуçалăх йухăнса пĕтрĕ. Пайанхи кунтан йеччен пурнассине ĕмĕрлĕхех пăрахăç тăватăп. Пуйан пурнăç вăл—колхозра кăна: Пĕтĕм уйрăм хуçалăхсене хампа пĕрле колхоза кĕме чĕнетĕп.

Кăçалхи болĵшевикла çуракине колхоз ăнăçлăн вĕçлерĕ. 1938 çулта вăл хăй умне гектартан 120 пăт тĕштырă туса илме задачă лартнă. Кăçал колхозăн вăйлă тырпул пулат. Кĕр калчисем те, çуртри калчисем те питĕ лайăх шăтса тухрĕç.

Халĕ колхозниксем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хĕрсе хатĕрленеççĕ.

Суйлав саккунĕсене, РСФСР тата Чăваш АССР Конституцийĕсене вĕренес тĕлĕшпе колхозниксем хушшинче 12 кружок ĕçлет. Вĕсенче 560 суйлавçă вĕренет.

ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă чухне те Йанкăлĵчă йалĕ Ленин—Сталин партийĕ тăратнă кандидатсемшĕн пĕр çын пек сасăларĕ. Ку вăл—пирĕн ĕççыннисем хамăрăн тăван ПСК(б) Партине тата халăхсен çулпуçне Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратнине кăтартат.

Арк. Нестĕрăв.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Çурçĕр Китайра хаљхи вăхăтра пысăк çапăçусем Лунхай чукунçулĕн районĕнче пулса пыраççĕ. Çав района Йапонин Манжурирен илсе пынă механизациле чаçĕсен пысăк çухатусем пулса пыраççĕ. Китай çарĕсем Йапонин 20 танкне йалтах çĕмĕрсе тăкнă, кунсăр пуçне 12 бронемашинă тата 28 грузовик туртса илнĕ. Чунтоура (Лањфынрен 18 километр хĕвелтухăçнеле) Китай çарĕсем Йапони отрйадне хупăрласа илнĕ.

Майăн 23-мĕшĕнче Макаоран (Кăнтăр Китай) кăнтăр йенчи районта Китай миноносецĕ Йапонин авианосецне шыва путарнă. Çакăн хыççăн Китай миноносецне тата пулă тытмали темиçе суднăна, Йапони крейсĕрĕсенчен персе пĕтерсе тăкнă.

(ТАСС).

Çурçĕр Китайри Хенањ провинцийĕн хĕвелтухăç пайĕнче, Лањфынпа Лованран çурçĕр йенче хытă çапăçаççĕ. Ку провинцирех, йапонĕçсем, хăйсен артиллерийĕ вăйлă пенĕ хыççăн, Веньсан йатлă уйес хулине йышăннă. Майăн 23-мĕшĕнче Йапонин 11 самољочĕ Кайфын çине бомбăсем пăрахнă.

Вăтаçĕр Китайра, Йанцзы йуханшывĕ тăрăхĕнче, Ухуран кăшт тавалларах, йулашки кунсенче лару-тăру калама çук йавăрланса çитнĕ. Ку вырăнта Йапонин çар карапĕсем 10 ытла. Унтан тăваларах, Дантун патĕнче, Йапонин çар карапĕсем татах 8. Йапони самољочĕсем Йанцзы хĕрринче пĕрехмайах разведка тăваççĕ.

Нанкинран хĕвеланăç йенче Лучжоу хули патĕнче куллен çапăçаççĕ. Вăтаçĕр Китайăн нумайĕш районĕсенче Йапони чаçĕсемпе партизансем хушшинче вăйлă çапăçусем пулса иртеççĕ.

Ањхуей провинцинче Китай çарĕсем Йапонин Мынчен хули тулашĕнчи аэродромне туртса илнĕ. Мынчен патĕнче халь те çапăçусем пыраççĕ.

(ТАСС).

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай çарĕн бойецĕсем позицире. (Союзфото).

Германи вăрçа хатĕрленни

Англин нумайĕш хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, фашисла Германи Чехословаки çине тапăнма хатĕрленнипе Вăтаçĕр Йевропăри лару-тăру йавăрланса пырать.

Хаçатсенчи хыпарсем тăрăх, майăн 22-мĕшĕнче, Гитлĕр патĕнчи канашлура вăрçа хатĕрленмели тĕплĕ плана сўтсе-йавнă. Çав канашлура Судет облаçĕнче каллех темиçе инцидент пуçарма йышăннă. Судет облаçĕнче йĕрке кўрес майпа вара Германи çарĕсене Чехословаки территорине кĕртсе йарасшăн.

(ТАСС).

Итали çарĕсен Испанире пулнă çухатăвĕсем

Итали çарĕсен Испанире мĕн чухлĕ çын пĕтни çинчен Италире официаллă сведенисем пичетлесе кăларнă. Ебро йуханшывĕ патĕнчи çапăçусенче кăна Итали салтакĕсемпе офицерĕсем 647 çын вилнĕ тата 2522 çын аманнă.

Вилнисем тата йăвăр аманса инвалида тухнисем кăна пĕтĕмпе 60 пин çын шутланаççĕ.

(ТАСС).

Йамайкă утравĕ çинчи лару-тăру çивĕчленни

Йамайкă утравĕ çинчи (Англин Караиб тинĕсĕ çинчи колонийĕ) забастовкă йухăмĕ вăйланса пырать. Забастовкă тăвакан рабочисем ĕç укçине ўстерме ыйтаççĕ.

Кингстонра (утрав çинчи тĕп хула) предприйатисемпе магазинсене хупнă, трамвайсем çўреççине тата телефон çыхăнăвне чарса лартнă. Урамсенче баррикадăсем тунă. Майăн 23 мĕшĕнче забастовкă тăвакан рабочисем урамсем тăрăх демонстраци организациленĕ. Демонстраци тăвакансене хирĕç Англи çарĕсене пулеметсемпе йанă. Демонстраци тăвакансемпе çарсем хушшинче пулнă çапăçура 40 çын аманнă. Демонстрацире пулнă 30 çынна арĕсленĕ.

Кингстонри полици забастовкă тăвакан рабочисене пĕр шеллемесĕр чукмарсемпе хĕнет.

Кингстонри пољницăсенче полици çыннисем хĕненĕ рабочисене сывалма мĕн пурĕ 200 çын вырттарнă.

Англин икĕ çар карапĕ Йамайкă утравне тухса кайнă.

(ТАСС).

Республиканĕçсен хăйулă çапăçăвĕ

Чылай вăхăт хушши фашиссем Андалузири фронт (Мотриљ сывăхĕнче) хĕрĕнчи района çирĕплетнĕ. Ку ĕçре вĕсем тыткăна лекнĕ астурийĕсемпе уса курнă.

Майăн 23-мĕшĕнче республикă çарĕн пĕр ротин салтакĕсем ирĕккĕн фашиссем йышăннă сырана ан çса, фронтран темиçе километрти тыткăна лекнĕ астурийĕсене тăракан тыйри форта атакăлама пулнă. Фортăн офицерне—командирне вĕлернĕ. Виçĕ сержант тата 17 салтак республиканĕçсем çумне пĕрлешнĕ. Плена лекнĕ 300 астурийĕсе ирĕке кăларнă.

Пĕтĕм ушкăн, республикă çарĕсем тунă атакăра пулăшăскер, Калаонда районĕнчи фронта çапăçса тухса, фашиссене пысăк çухату тутарнă. Республиканĕçсем нумай винтовкăсем тата çарта кирлĕ хатĕрсем тытса илнĕ.

(ТАСС).

Сывлăшри пысăк çапăçу

Майăн 23-мĕшĕнче, Испанин хĕвелтухăç фронтĕнчи Леридă районĕнче, сывлăшра, пысăкран та пысăк çапăçу пулса иртнĕ. Çапăçу пĕр сехет ытла пынă. Çапăçăва 100 самољот ытла хутшăннă. Республикă авиацийĕ фашиссенне 18 самољот персе ўкернĕ, хăйсен 3 самољот пĕтнĕ. Игаљйанĕçсен икĕ љотчикĕ парашўтпа сикнĕ Республиканĕçсем вĕсене тыткăна илнĕ.

(ТАСС).

Трактăрсем горючисĕр лараççĕ

Кăраççин çук пирки Тракри МТС трактăрĕсем 6—7 кун хушши ĕнтĕ ĕçсĕр лараççĕ. Майăн 18-мĕшĕнче Канашри 20 пичке кăраççин илнĕччĕ. Вăл нумайă пымарĕ, вара майăн 19-мĕшĕнчен пуçласа трактăрсем пурте ĕçлеме чарăннă.

Горючисене вăхăтра кўрсе килейменни çакăнтан килчĕ. Малтанхи вăхăтра машинă-трактăрлă станцин машинĕсем пулман. Кайран Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, майăн 19-мĕшĕнчен пуçласа, горючисене Шупашкартан парса тăмалла турĕ. Çав кун 100 тенкĕ тўлесе 12 пичке кăраççин базаран Шупашкара хăпартса майăн 22-мĕшĕнче аран-аран кўрсе килтĕмĕр. Халь вăл та пĕтрĕ.

Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Коротков йултăшпа телефон тăрăх калаçнă хыççăн, вăл Тракри МТС валли горючисене малашне Вăрнартан памала тума пулчĕ. Вăл та пулса çитеймерĕ. Майăн 23-мĕшĕнче Канашри базăран каллех 10 пичке пачĕç. Майăн 24-мĕшĕнче вăл та пĕтрĕ.

Çапла ĕнтĕ горючисене илес тĕлĕшпе 6—7 кун хушши волокита пырать, 6—7 кун хушши трактăрсем ĕçсĕр лараççĕ.

Пире, Тракрене, Канашри йе Вăрнарти базăран горючисене илсе тăма лайăхрах пулатчĕ. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн ĕçлекенĕсем урăхла шутлаççĕ—вĕсем Шупашкартан йе Сентĕрвăрринчен парасшăн, анчах унтан та йĕркеллĕ парса тăраймаççĕ.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Тракри машинă-трактăрлă станцине горючисене ним чăрмавсăр парса тăмала тăвассине пайанах татса хумала.

Тракри МТС директăрĕ УГОЉКОВ.

Трактăриссем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ

Çĕрпўри машинă-трактăрлă станцинчи Н. Шишкин йертсе пыракан 9-мĕш бригадă çуракинче трактăрсемпе ĕçлес плана тултарнă. Бригадăри 3 трактăрпа 378 гектар сухаланă.

Шишкин бригади трактăрсемпе ĕçлес тĕлĕшпе пĕлтĕр те малти вырăна тухнăччĕ, кăçал та çавнашкалах, ку бригадăри трактăриссем малти вырăна йышăнассишĕн пĕр пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Çураки ĕçне пĕтерне хыççăнах, бригадă ирхи çĕртме сухине сухалама тытăнчĕ. Ирхи çĕртме сухине сухаланă çĕрте те трактăриссем ăмăртса ĕçленипе хăйсен ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пыраççĕ. А. Никитин тата М. Силантйев трактăриссем нормăна 140 процент таран тултарса пыраççĕ. П. Самин трактăрис трактăрпа нормă тăрăх ирхи çĕртме сухине 9 гектар сухалас вырăнне 13 гектар сухалать, сунтармалине 10 килограм перекетлет. А. Сыркăв трактăрис та çменăра 8 гектар сухалать.

9-мĕш бригадă ку вăхăтчен 200 гектар ирхи çĕртме сухине сухаланă.

К. Михайлăв.

Канаш—Шупашкар чукунçул строителĕстви

Майăн 25-мĕшĕнче 508 метр рељсă хунă. Шупашкара çитесси тата 13 километр та 750 метр йулнă.

Строителĕства управленийĕ хăйĕн ĕçне çирĕплетсе вăйлатса пыни курăнмасть. Ĕçлекенсен шучĕ ўсес вырăнне кашни кунах чакса пырать. Телефонпа телеграф тата çелектăр провăчĕсене тума тытăнман.

Шупашкарти вакзала тума майăн 20-мешĕнчех пуçламалаччĕ, халиччен те ĕçе пуçăнман. Кана тăвассине вăрăма тăсса йани, халиччен те стройтрестпа догăвар туманнинчен те лайăх курăнать.

72 çулхи кĕслеçĕ

ШЕТМĔПУÇ (Иылей р.) йалсоветне кĕрекен „Çĕнĕ хунав" колхоз членĕ Антонав Данил, 42 çул ĕнтĕ кĕсле çинче выљать. Вăл кĕсле çинче тĕрлĕрен йура, вăйа-ташă кĕввисене 200 йахăн выљама пĕлет. Антонăв халĕ 72 çулта ĕнтĕ.

Б. Йакăвлĕв.

Трактăриссен Пĕтĕм Сойузри канашлăвĕ

Совет Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, ийунĕн 3-мĕшĕнче, Мускавра машинпа трактăр станцийĕсенче ĕçлекен трактăриссен Пĕтĕм Çойузри канашлăвне пухать. Канашлу трактăриссене ĕçленĕшĕн тўлемели çĕнĕ системăн пройектне тата хирте трактăрпа ĕçлемели нормăсене пăхса тухать.

(ТАСС).

Кăçал, майăн 27-мĕшĕнчен 30-мĕшĕччен

Шупашкар хулинче Чапайĕв поçолкинчи пасарта

ВЫЉĂХ-ЧĔРЛĔХ СУТĂН ИЛМЕЛИ

ЙАРМĂРКĂ ПУЛАТЬ

Суту-илў организацийĕсем промышлĕннăçпа апат-çимĕç таварĕсене ТĔРЛĔРЕН СУРТЛИСЕНЕ илсе килеççĕ

Хапрăкра тĕртнĕ пир-авăр, çĕрçĕм материсем, çыхса тўнă кĕпе туммир, çĕленĕ кĕпе-йĕм, сăран атă-пушмак, калўшсем, пуç тутрисем, машинă çиписем, кондитĕр, çăкăр булкă çимĕçĕсем, тĕрлĕрен савăт-сапа, чашăк тирĕк, тата ытти куллен кирлĕ таварсем.

Пур колхозсене, колхозниксене тата уйрăм хуçалăхлă хресченсене йалхуçалăх продуктисемпе килме чĕнеççĕ: выљăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк, аш-какай, пахча-çимĕç, çăмарта, сĕт, çу тата ытти продуктсене те илсе килмеле.

ЙАРМĂРКĂРА ЦИРК, ачасен пукане театрĕ тата марионеткăсен театрĕ ĕçлеççĕ.

Пур справкăсене те çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле: Чебоксарский ГОРТОРГОТДЕЛ ул. К. Маркса, дом № 1. Телефон № 4—88.

ЧĂВАШСЕН ЙАЛХУÇАЛĂХ ИНСТИТУЧĔ

1938—1939 ВĔРЕНЎ ÇУЛĔНЧЕ

студентсене илесси çинчен пĕлтерет

Кăçал агрономипе зоотехникă факуљтечĕсене илеççĕ

Вĕренмели срук 4 çул та 4 уйăх.

Институт пысăк квалификацилĕ агроном-растениеводсене тата зоотехниксене вĕрентсе хатĕрлет.

Зайавленисене августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Испытанисем августăн 10-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пулаççĕ. Заљатисем çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Института вĕренме кĕме испытанийе тăма вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисем (1935 çулччен 9 çуллă тулли вăтам шкултан вĕренсе тухнисем, рабфак, техникум пĕтернисем йе екстернат йĕркипе вăтам шкул программи тăрăх екзамĕн тытнисем) пултараççĕ.

Зайавлени çумне çак документсем кирлĕ:

1. Вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат.
2. 3 фотокартăчкă—кашнин çинче алă пусса государствă учрежденийĕ çирĕплеттерни пулма кирлĕ.
3. Автобиографи.
4. Паспăрта пĕрле илсе килмеле.
5. Çар тивĕçлĕхне кăтартакан справкă

Вĕренме кĕрекенсене пурне те çак предметсем тăрăх испытани тăваççĕ: вырăс чĕлхи, математикă, физикă, политграмăтă, хими, географи, тата пĕр-пер йутçĕршыв чĕлхи (Англи, Француз, Нимĕç чĕлхи).

Вăтам шкулсенчен (10 çуллă шкулсенчен) „отличнă" паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытани тумасăрах илеççĕ.

Вĕренме кĕрекенсен çулĕ 17 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран. Вĕренме йышăннисене стипенди параççĕ тата институтăн обшчежити тата столовăй пур. Испытанине килекенсен пурин те испытани вăхăтĕнче Шупашкарта пурăнмалăх укçа илсе килмеле. Обшчежити институт парать.

Институтăн почтă адрĕсĕ: гор. Чебоксары, Ленинградская, 19.

Килмели адрес: Ст. Канаш. Казанской ж.—д., оттуда автобусом до Чебоксар, или пристань Чебоксары на Волге.

3—3

Шупашкарти Акушер шкулĕ

1938—39 вĕренў çулĕнче

Пĕрремĕш курса вĕренекенсене илесси çинчен пĕлтерет

Вĕренмели срук икĕ çул.

15 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран хĕрарăмсене тата арçынсене те, вăтам шкулта çичĕ çултан кайа мар вĕренни чухлĕ пĕлў илнисене йышăнаççĕ.

Зайавленисене ийунĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Зайавленисене шкул директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле (подлинниксем кирлĕ) памала:

1. Хăш çулта çуралнине кăтартакан свидетĕлствă.
2. Вĕренни çинчен свидетĕлствă.
3. Государствăн емеллекен учрежденинчен илнĕ ĕнентерў, ун çинче вĕренме кĕрекенĕн сывлăхĕ медицинă шкулне вĕренме кĕме йурăхли не кăтартни пулма кирлĕ.
4. Икĕ фото-картăчкă (хăй алпусса çирĕплеттерни)

Кусемсĕр пуçне 16 çултан иртнисем паспăрт пĕрле илсе килеççĕ.

Испытанине тăма ирĕк панисене хут йарса чĕнеççĕ. Чĕннĕ тăрăх çеç килмеле. Чĕнмесĕр килнисене испытанине кĕртмеççĕ.

Испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пыраççĕ.

Шкула кĕрекенсене пурне те математикă тăрăх (арифметикă, алгебрă, геометри), физикă, географи, вырăс чĕлхи тата политграмăтă тăрăх (тулли мар вăтам шкул программи чухлĕ) испытани тăвěççĕ.

Çичĕ çуллă шкултан тĕп предметсемпе „отлично" тата ыттисемпе (рисовани, черчени, йурласси, музыкă тата физкуљтурă) „лайăх" паллăран кайа мар паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ, çавнашкалах тата тулли вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисене испытани тумаççĕ

Испытани тытнисене августăн 21-мĕшĕнчен 25-мĕшĕччен вĕренекенсен шутне кĕртеççĕ.

Вĕренекенсене валљи обшчежити пур, вĕреннине кура стипенди параççĕ.

Заљатисем çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Шкул адрĕсĕ: гор. Чебоксары, Волгострой, Акушерская школа.

ДИРЕКЦИ.

3—1

Китай халăхĕн паттăр кунçулĕсем

Китай халăхĕ Йапони пусмăрĕнчен ирĕке тухассишĕн пыракан вăрçăра пиншер геройĕсем вĕрентсе çитĕнтерчĕ. Хресченсем, салтаксем, горњаксем, студентсем халĕ партизансен нумай отрйачĕсене, регуљарлă çар чаçĕсене йертсе пыраççĕ, хăйсен çĕршывĕ çине тапăнакан Йапони империалисăмне хирĕç паттăррăн кĕрешеççĕ. Халăх оборонин отрйачĕсенче Китай çыннисем темиçе мĕлйун çын çар ĕçне вĕренеççĕ.

Çурçĕр Китайра, Хебей тата Чахар провинцисенче партизансен пысăк мар отрйачĕсенчен 100 пиñ çынтан тăракан Çурçĕр Китайри халăх çарĕ пулса тăнă. Çак çарăн отрйачĕсем студентсемпе салтаксен пысăк мар ушкăнĕсенчен, хресченсен тата рабочисен вырăнти отрйачĕсенчен пĕрлешсе ўсеç пынă. Халăх çарĕн кашни отрйачĕсем хăйсен районĕсенче хăйсем тĕллĕн, анчах кўршĕри отрйадсемпе пĕрле пулса, штаб йертсе пынипе йапонĕçсене хирĕç кĕрешеççĕ. Регуљарлă çарпа çыхăну тытассине халĕ лайăхах йĕркелемен-ха, анчах çав çыхăну пур. Китайăн аслă стенинчен кăнтăр йенче Çурçĕр Китайра партизансем çапăçакан виçĕ район пур: Бейпин, Хĕвелтухăç Хебей, Çурçĕр Чахар районĕсем.

Вĕсенчен чи пысăкки — Бейпин районĕ. Ку вăл Бейпин сывăхĕнчи сăртлă район. Кунти халăх çарĕнчи партизансен 6 отрйачĕ йапонĕçсене хирĕç çапăçать. Çав отрйадсене халăхран тухнă, вăрçă пуçланиччен вăрçă ĕçне нимĕн пĕлмен, халĕ вăрçă ĕçне вĕреннĕ çынсем йертсе пыраççĕ.

Партизансен отрйачĕсен командирĕсем хушшинче Бейпинри университетри студент пулнăскер Чжао Тун пуринчĕн те паллă вырăнта тăрать. Вăл 1936 çултах хăйĕн тусĕсемпе—студентсемпе пĕрле хула сывăхĕнчи йалсене кайса çўренĕ, хресченсене Йапони империалисĕсене хирĕç кĕрешме чĕннĕ. Бейпиñ хулине йапонĕçсем туртса илсен, Чжао Тун тепĕр 7 студентпа пĕрле хăй пĕлекен йалсене кайнă, хресченсен пĕчĕк ушкăнне пухнă, темиçе винтовкă тупса йапонĕçсене хирĕç кĕрешме тытăннă.

Кăшт кайарахран Бейпинран, çурçĕрпе хĕвеланăç университетĕнчен, çав отрйада тата 43 студент пынă. 1936 ç. нойабĕр уйăхĕ тĕлне отрйад 1.400 боец ытла пĕрлештересе тăнă. Йапонĕçсем çак отрйада хирĕç темиçе хутчен те хăйсен отрйачĕсене йанă. Анчах вĕсен нимĕн ĕç те тухман. Йапонĕçсен атакине çĕмĕрсе, отрйад противникăн хĕçпăшалĕсене туртса илнĕ. Çапăçура боецсем вуншар çын вилнĕ, анчах отрйад сахаланман, вăл çĕрмайах ўсе пынă.

Чжао Тун штабĕ хаљхи вăхăтра 7—8 пин боец пĕрлештерсе тăракан партизансен темиçе отрйадне йертсе пырать. Чжао Тун чаçĕсем çурçĕрти халăх çарĕн тĕп отрйачĕсенчен пĕриссем пулса тăраççĕ.

Бейпин районĕнче çапăçакан Гун Чжан-хай, Фыњ Хуањ-чжан, Ђањ Цзымин, Иуй—Бин-жу тата Ли Тањ-фан отрйачĕсем те çакнашкал йĕркепех организациленнĕ. Вĕсем кунран-кунах çирĕпленсе, хĕçпăшалланса пынă.

Гун Чжан-хай, отрйад командирĕсенчен пĕри вăрçă пуçлансан Бейпинри хăйĕн çуртне сутнă та, 1.200 доллăр укçапа 2 пулемет, 20 маузĕр илнĕ. Йапонĕçсен аллинчи Бейпинран вăл вĕсене сўп-çап тийенĕ урапа çине хурса илсе тухнă. Хуларан тухсан, хресченсен ушкăнне тата 9-мĕш çар йулашкисене хăвăрт пухнă. Гун Чжан-хай отрйачĕ 250—300 çынтан тăрать, вăл Бейпин сывăхĕнче йапонĕçсене хирĕç çапăçать. Йапони гарнизонĕсем çине темиçе хут тапăнса уйрăмăн илсен, Беñцийуањ çине тапăнса лайăх хĕçпăшалланнă, хĕлле ту çинче вырнаçса, çуркунне йапонĕçсене хирĕç вăйлăн çапăçма тытăннă, халăх çарĕн пысăк пайĕ пулса тăнă. Бейпин районĕнчи партизансен виççĕмĕш геройла руководителĕ Фынж Хуањ чжан хăй тавра хресченсен темиçе „хĕрлĕ пик" обшчĕствине пĕрлештернĕ, çак обшчĕствăсем çар ĕçне питĕ лайăх вĕреннипе, хăйулă пулнипе чапа тухнă.

Хĕвелтухăç Хебей районĕнче халăх геройĕсем, партизансен отрйачĕсен руководителĕсем Ли Иñ-цзун тата Ли ду чапа тухнă. Вĕсем Йапони çарĕсен тылне çĕмĕрес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртереççĕ.

Йапонĕçсем çак отрйадсене хирĕç темиçе хутчен те каратĕљнăй експедицисем йанă. Партизансене йалтах çапса аркатнă тесе темиçе хутчен те сăмах сарнă. Анчах та Ли Иñ цзун тата Ли ду отрйачĕсем кашниччех Тунчжоу патĕнче, йе Уцина патĕнче йапонĕçсене çĕмĕрсе тăкса, вĕсен хĕçпăшалĕсене туртса илнĕ.

Ван У-дйањ тата Жен Цзйан пин — Çурçĕр Чахарти геройсем. Ван У-дйан — вырăнти хресчен, вăрçăччен винтовкă çинчен нимĕн те пĕлмен. Вăл халăхпа лайăх çыхăнса тăрать. Районри пур сукмаксене те пĕлет. Унăн отрйадне никам та тытма пултараймасть. Ĕлĕк салтак пулнă çынсем пулăшнипе вăл 500 партизан пухнă, вĕсене çар ĕçне лайăх вĕрентнĕ. Жен Цзйанпин вăрçă пуличчен шкулра çар ĕçне вĕрентнĕ. Бейпинран тарсан, вăл темиçе салтаксемпе, учителсемпе пĕрле Бейван йатлă вырăнта партизансен отрйачĕ организациленĕ. Часах йапонĕçсене хирĕç восстани тунă çар чаçĕсем вĕсемпе пĕрлешнĕ. Отрйад кĕске вăхăтра 700 çынна çитиччен ўснĕ. Кун хыççăн Жен Цзйан пин Бейпин сывăхĕнчен Китайăн аслă стени патне куçнă. Кунта унăн отрйачĕ çул йĕрсене çĕмĕрсе Йапони транспăрчĕ çине тапăннă, Манчжурирен Çурçĕр Китайа çар илсе килессине чарнă.

Çавăн пек Китай халăхĕн геройла пурнăçĕпе ĕçĕсем. Лайăх пурăннă чухне нимĕн паллă пулман çынсем, Йапони интервенчĕсене хирĕç пынă кĕрешўре ўсе паллă геройсем тата халăх çулпуçĕсем пулса тăраççĕ. Геройсен речĕсем çĕнĕ партизансемпе, салтаксемпе, студентсемпе, рабочисемпе, тулса пыраççĕ. Китай халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсем Йапони интервенчĕсене хирĕç хăватлăн кĕрешеççĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

„Сойузкинопрокат"-ăн Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ экрансем çинче кăтартма сасла, нумай сăрлă, çĕнĕ фильм кăларать

„СКАЗКА О РЫБАКЕ и РЫБКЕ"

А. С. Пушкин произведенийĕ тăрăх укернĕ.

Хаçатсем çинче тата радио тăрăх пĕлтерĕннисене асăрхăр!

Уполномоченный Чувашглавлита № 264. 13

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 408